ÇАМРĂК

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе министерстви пулăшнипе

Корреспонденци

Район хаçачĕпе тачă çыхăну тытас шухăшлисемпе «Çамрăк журналистăн» иртнĕ кăларăмĕнче хаçата заметка çырас ăсталăха алла илнĕччĕ. Паян вара корреспонденци пирки тĕплĕнрех калаçăпăр.

Корреспонденципе заметка хушшинче пĕрпеклĕх чылай. Корреспонденци те, заметка пекех, журналистикăн анлă сарăлнă авалхи жанрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вĕсем иккĕшĕ те ку е вăл информацие вулакан патне оперативлă çитерме май паракан мел пулса тăраççĕ. Корреспондентсем лару-тăру, факт, пулăм пирки хыпарлаççĕ, вĕсен аталанăвĕ пирки каласа параççĕ, хăйсен шухăшне пĕлтереççĕ.

Астăватăр пулĕ, хаçатри заметка «Мĕн? Äçта? Хăçан?» ыйтусем çине хурав пама тивĕç тĕрĕмĕр. Корреспонденци тĕллевĕ вара – ку е вăл пулăма, факта е фактсен ушкăнне кăтартса парасси кăна мар, ăна тишкерсе хак парасси, «пурнăçăн сыпăкне» сăнласа кăтартасси. Автор корреспонденцире пĕлтерет кăна мар, факт е пулăм мĕнпе çыхăннине тăнлать, вĕсен шалти тытăмне уçса парать. Корреспонденцире ку е вăл пулăм пирки авторăн шухăш-туйăмĕ мĕнле пулни уççăнах курăнать. Апла пулсан ку вăл мĕн курни-пĕлнине каласа пани кăна мар. Кун пек пулăм пулса иртни мĕнпе çыхăннă-ха? Унăн сăлтавĕ, пĕлтерĕшĕ, хаклăлăхĕ мĕнре? Малалла асăннă пулăм еплерех аталанса пырĕ? Корреспонденцире çак ыйтусем çине хурав пама тивет. Апла пулсан корреспонденци ытларах аналитика жанрĕ енне сулăнать.

Çавна май корреспонденцисене икĕ енне уйăрма пулать. Пĕрремĕшĕ вăл – **информаци корреспонденцийĕ**. Автор хăйĕн материалĕнче пулса иртекен пулăмсем пирки тĕплĕн каласа парать. Фактсене пĕрлештерсе пĕр темăна çыхăнтарать. Унăн задачи – пулăм çине тимлĕх уйăрасси, унăн аталану енĕсене кăтартса парасси. Информаци корреспонденцийĕнче те, паллă ĕнтĕ, тишкерӳ пачах çук мар. Çапах та вăл тарăн мар.

Иккĕмĕшĕ – **аналитика корреспонденцийĕ.** Кунта вара автор пулăм пирки пĕлтернипе пĕрлех ытларах çак пулăм ыттисемпе мĕнле çыхăнма пултарнине сăнлать. Тема тулашне тухса кайса журналист лару-тăрава тишкерет, пулăмсемпе фактсен çыхăнăвĕн сăлтавĕсене палăртать. Журналист, тĕпчевçĕ пекех, пурнăçри конкретлă тĕслĕхсене шута илсе, обществăра пулса иртекен пулăмсене тĕпчет. Кун пек корреспонденцисенче кайран пĕтĕмлетме, системăлама май паракан фактсене пухас процесс пырать.

Çапах та информатика тата аналитика корреспонденцийĕсенче пĕлтерĕшли – тарăн содержани, материалта фактсене уççăн çутатни, çирĕп пĕтĕмлетӳсем туни. Корреспонденцире шухăш конкретлă фактсенчен пуçланать те вĕсене тишкернипе вĕçленет. Пĕр сăмахпа калас пулсан, корреспонденцире тĕп шухăш – конкретлă пулăм çинче актуаллă темăна уçса парасси.

Корреспонденцин хăйне тивĕç ятарлă уйăм енĕсене те палăртса хăварма пулать. Пĕрремĕшĕнчен, корреспонденци авторĕ хăйĕн материалĕнче пĕр-пĕр вырăнпа çыхăнса тăракан пулăм, факт пирки пĕтĕмлетӳ тăвать. Уйăм коллективри лару-тăрава тишкерсе хак панă май, автор пулни-иртни пирки каласа парать, тишкерӳ ирттерсе малтанхи пĕтĕмлетӳсем тума тăрăшать.

Иккĕмĕшĕнчен, корреспонденцире илсе кăтартнă фактсем пĕлтерĕшлĕрех проблемăсем пирки хыпарлаççĕ кăна, авторшăн чи пĕлтерĕшли вара – пулса тăнă лару-тăрава тишкерсе хак парасси. Апла пулсан журналист, конкретлă событисем çине таянса, вĕсем пирки анлăн та тĕплĕн каласа пама тĕллев лартмасть. Вĕсем пирки каласа панă май, вăл ку пулăм пĕрлехи пĕтĕмĕшле саккунлăхпа çыхăнса е ăна пăхăнса тăнине кăтартасшăн.

Кирек епле аналитика е тишкерӳ тексчĕ те конкретлă фактран тата комментарирен тăрать. Факт вăл – авторшăн интереслĕ пулса тăракан япала пирки пĕлтерни: уйăм событи, пулăм, лару-тăру. Комментари вара – конкретлă çав факта хак пани, унăн сăлтавĕсене, аталану процесĕсене тишкерни.

Çапла вара корреспонденцин ытларах сарăлнă пĕтĕмĕшле «архитектурине» çапларах сăнлама пулать: пуçламăшĕнче – тĕп пулăм пирки каласа пани, хыççăн – автор вулакана хăйĕн тĕрĕслĕхне ĕнентерме май паракан тишкерӳ тата комментари туни, вĕçĕнче – тĕп пулăм мĕн патне илсе çитересси пирки çырса кăтартни.

Корреспонденцин пĕлтерĕшлĕрех енĕсене сăнларăмăр. Кун пек материалсем ытларах чухне хаçат страницинче 100 йĕркерен ытла йышăнмаççĕ. Апла пулин те, конкретлăрах калас пулсан, пĕтĕмпех журналист ăсталăхĕнчен килет. Çавăнпа та хăш чухне журналист хăйĕн материалĕн тытăмне пачах урăхларах йĕркелеме те пултарать, материал та калăпăшлăрах пулать.

Савăк кунсем

Эх, аван-çке çу кунĕсем! Хĕвелĕ те пирĕн çине ăшшăн та савăкрах пăхнăн туйăнать. Эпир, Москакасси шкулĕнче вĕренекен ачасем, çак илемлĕ çу кунĕсен пĕр пайне шкул çумĕнчи «Смешарики» лагерьте ирттеретпĕр.

Воспитательсем тăрăшнипе лагерьти кашни кун тĕрлĕ мероприятипе пуян. 2019 çул Театр çулталăкĕ пулнă май, ытларах юрă юрлатпăр, ташă ташлатпăр, спектакльсем хатĕрлетпĕр, интереслĕ пьесăсемпе, юмахсемпе паллашатпăр. Çавăнпа шкул тата ял библиотекине çÿретпĕр.

Ачасене ытларах спорт вăйăсем килĕшеççĕ. Похода çÿреме те кăмăллатпăр, хамăр тăрăхри илемлĕ вырăнсемпе паллашса вĕсене хаклама вĕренсе пыратпăр.

Мероприятисене ушкăнпа ирттернĕ май, ачасем хушшинчи туслăх кунран-кун çирĕплесех пырать: кашни ача теприне пулăшма хатĕр.

Манăн çак илемлĕ кунсемшĕн лагерь ертÿçине Марина Васильевнăна тата воспитательсене тав сăмахĕ калас килет. Вĕсем пирĕнпе яланах ăшă кăмăлпа каласаççĕ, пире кулленех савăнăçлă самантсем парнелеме тăрăшаççĕ.

Аван та савăк-çке çу кунĕсем!

Рада ВАСИЛЬЕВА,
Москакасси шкулĕнче вĕренекен.

Асăну вахтине хутшăнтăмăр

Ярапайкассинчи вăтам шкулта йĕркеленĕ «Радуга» лагерьте çуллахи каникул кунĕсем питĕ хăвăрт иртеççĕ. Тĕрлĕрен мероприяти тăтăшах пулать.

Акă нумаях пулмасть асăну вахтине хутшăнтăмăр. «Лидеры» тата «РДШата» отрядсем асăну палăкĕсем патне хума чечек кăшăлĕсем хатĕрлерĕç. Июнĕн 22-мĕшĕнче вара Э. Гордеевпа М. Александрова ертсе пынипе Ярапайкасси ял тăрăхĕн территорийĕнчи Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнисене асăнса лартнă палăксем патне чечек кăшăлĕсем хума тухса кайрăмăр.

Çав кун çуллахи сывлăх сиплев лагерĕн воспитанникĕсем Сыпайри, Кÿстерекри, Шурчари, Шуркассинчи асăну палăкĕсем патĕнче пулма ĕлкĕрчĕç. Ачасем палăксем патĕнче пĕр минут шăп тăрса вăрçăра вилнисене асăнчĕç, чечек кăшăлĕсем хучĕç. Шкул ачисем вăрçă пуçланни, вăрçăн йывăр çулĕсем пирки каласа панине итлерĕç кăна мар, çамрăк салтаксен фронтран çырнă çырăвĕсене вĕсен тытса вулама та май килчĕ.

Каялла таврăннă чухне «Лидеры» отряд членĕсем Шуркассинчи çеттуй çăл куç патне кĕрсе тухрĕç. Кунта пулса курнипе те ачасем кăмăллă юлчĕç.

Маргарита АЛЕКСАНДРОВА.

Асра юлмалли лагерьте чылай пулчĕ

Сисмерĕмĕр те, шкулсенче ĕçпе кану, профиль лагерĕсен пĕрремĕш смени вĕçленчĕ. Мĕнпе асра юлчĕç-ха легерьти кунсем унта çÿрекенсемшĕн? Çак ыйту çине хурав пама ыйтрăм эпĕ Орининти вăтам шкулти «Çункăç» профиль лагерьне çÿренисенчен. Акă мĕн хуравларĕç мана вĕсем:

Катя: – Хамăр районти «Браво» страус фермине çитсе курни мана анчах мар, пурне те килĕшрĕ пулĕ тесе шухăшлатăп. Кунта курмалли, пĕлмелли питĕ нумай пулчĕ. Унччен эпир ку чĕрчунсене телевизорпа кăна курма пултарнă вĕт-ха. Вĕсем вара хамăр районтах пурăнаççĕ. Ытти интереслĕ чĕрчун та унта сахал мар иккен. Питĕ килĕшрĕ.

Карина: – Манăн вара нихăш кунне те уйрăммăн палăртас килмест. Лагерьти кашни кун пирĕншĕн интереслĕ те усăллă пулчĕ. Тĕрĕссипе лагерьти кашни кун хăйне евĕр иртрĕ, пĕри тепринчен уйрăлса тăчĕ. Хамăршăн усăллине тата интереслине эпир кашни кунах пĕлсе пытăмăр.

Денис: – Маншăн вара канмалли кунсем чи лайăххисем пулчĕç. Мĕншĕн тесен вĕренме те каймалла мар, лагере те. Канмалли кунсенче кăнтăрлачченех çывăрма май пулчĕ.

Ачасене тепĕр ыйту çине те хурав пама ыйтрăм. Малашне лагерьти пурнăçа татах интереслĕрех те кăсăклăрах тăвас тесен, сирĕн шутпа мĕн тумалла-ха, лагерь пурнăçне мĕнле çĕнĕлĕхсем кĕртмелле? Ачасен хуравĕсем ку хутĕнче çапларах пулчĕç:

Катя: – Мана экскурсисем питĕ килĕшеççĕ, курса çÿреме юрататăп. Çавăнпа та ачасене экскурсисене ытларах илсе çÿресен татах лайăхрах пулĕ кăна тесе шухăшлатăп. Çитес çул та лагере хавас кăмăлпах çÿрес шухăшлă.

Карина: – Пирĕн районта мĕнпе те пулин палăрса тăракан вырăнсем сахал мар. Вĕсенчен чылайăшĕнче эпир халиччен пулса курман. Экскурсисем, походсем пирки уйрăммăн калас пулсан, малашне вĕсене çитсе курасчĕ. Темиçе хут илтиччен хăвăн куçупа пĕрре те пулин курнине нимĕн те çитмест.

Лагере çÿренисемпе тĕл пулса калаçаканĕ – «Çункăç» лагерĕн тĕп редакторĕ,
Оринин шкулĕнче 5-мĕш класра вĕренекен
Алина БЛИНОВА.

Сăн ÿкерчĕкре: «Браво» страус ферминче пулса курни лагере çÿрекенсене пурне те килĕшрĕ.

ЖУРНАЛИСТ

информаци политикин тата массăллă коммуникацисен пурнăçа кĕрет

Журналистăн темĕн те пĕлмелле

Шкулсенче юлашки шăнкăрав янăранă хыççăн тепĕр тапхăр пуçланать – лагерьсем ĕçе кӳлĕнеççĕ. Орининти вăтам шкулти журналист профильне суйласа илнĕ «Çункăç» лагерь те июнь уйăхĕнче кĕрлесе кăна тăчĕ.

Çак лагерьте «Çамрăк журналист» программăпа ĕçлерĕмĕр. Кунсеренех заметкăсем, статьясем çыртăмăр. Шкулта хаçат кăларса тăтăмăр. «Кулăш саманчĕсем», «Спорт хыпарĕсем», «Кулленхи ĕç-пуç», «Пĕлетĕр-и?» рубрикăсене тытса пытăмăр.

Хамăрăн ăс-тăна, пĕлĕве пуянлатас тĕллевпе эпир Муркаш район хаçачĕн редакцине те çитсе килтĕмĕр. Кунта кашни сотрудникăн хăйĕн пӳлĕмĕ. Çакă, паллах, журналистсемшĕн уйрăмах лайăх: шăплăхра шухăшлама, статьясене çырма аванрах.

Хаçатăн тĕп редакторĕ Анатолий Тихонов хаçатăн историйĕпе, хаçата 1996 çултах компьютерпа калăплама тытăннине, компьютера чăвашла «вĕрентнине» пĕлтерчĕ. Журналистăн паха енĕсем мĕнлисем пулмалли пирки те, журналиста ăçта вĕренмеллине те каласа пачĕ.

Наталия Николаева журналист хаçата хатĕр материалсене, сăн ӳкерчĕксене епле майпа вырнаçтарнипе паллаштарчĕ. Пире экскурси вăхăтĕнче сăн ӳкерчĕк туса самантрах хаçат страници çине кăларса пачĕ. Сăн ӳкерчĕк айне пурте пĕрле экскурсире пулни çинчен те çыртăмăр. Çапла эпир «Çĕнтерӳ ялавĕ» район хаçачĕн асăнмалăх кăларнă пĕрремĕш страницине «вырнаçрăмăр».

Пире редакцире питĕ килĕшрĕ. Çавăнпах эпир ыйтусем те чылай патăмăр. Журналист пулма нумай пĕлмеллине ăнлантăмăр: тĕрĕс çырма, каласа пĕлни те, компьютерпа тĕрлĕ программăпа ĕçлеме пултарни те, çĕршыв, республика шайĕнчи событисене, хыпарсене пĕлсе тăни те, ытти те кирлĕ. Апла шкулта вĕреннĕ вăхăтрах темĕнпе те интересленмелле, ăс-тăна туптамалла.

«Çункăç» лагере çӳрекенсем.

Çу кунĕсем усăллă иртеççĕ

Кăçал эпĕ Ильинкăри вăтам шкултан тăххăрмĕш класран вĕренсе тухрăм. Экзаменсене ăнăçлă тытнă хыççăн шкул çумĕнчи ĕçпе кану лагерьне çӳреме пуçларăм.

Шкулта вĕренекен вун тăватă çултан тытăнса вун сакăр çула çитичченхи ачасене кăçал районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарчĕç. Пире вара вунă кунлăх вожатăйсем пулса ĕçлеме сĕнчĕç. Пире валли ĕç кĕнекисене те уçрĕç.

Кĕçех ответлă самант пуçланчĕ. Ачасене ĕçлеттерес пулать, çав вăхăтрах канма та вăхăт уйăрмалла, канăва усăллă ирттерме тăрăшмалла. Малтанхи кунсенче эпир шкул участокĕнче кăшман, кишĕр, сухан анисене çумласа çум курăкĕнчен тасатрăмăр, çĕре кăпкалатрăмăр.

Парникра купăста, помидор, чечек калчисене акса ӳстернĕччĕ. Ачасем вĕсене уçă вырăна куçарса лартассипе те тимлерĕç. Çавăн пекех çĕр улми пуссине те çум курăкĕнчен тасатса тирпейлерĕмĕр, касăсене купаласа тухрăмăр.

Пушă вăхăтра тĕрлĕрен вăйă йĕркелерĕмĕр, конкурссем хаваслă иртрĕç. Ĕçпе кану лагерьне çӳренĕ кунсенче икĕ хутчен Муркашри «Сывлăх» спорт шкулĕнче пултăмăр. Кунта вара кашниех бассейнра ăш каничченех ишсе киленме пултарчĕ. Ачасем питĕ савăнчĕç.

Мана ачасемпе вожатăй пулса ĕçлеме питĕ килĕшрĕ.

Ольга РАСКОВА,
Ильинка шкулĕн вĕренекенĕ.

Ыттисемшĕн – тĕслĕх

Оринин шкулĕнчи 4 класран вĕренсе тухнă Валерия Иванова **(сăн ӳкерчĕкре)** тăватă çул хушшинче самай пысăк ӳтăмсем тума пултарчĕ. Шашкăлла выляссипе пуçламăш классем хушшинче 1-мĕш пулчĕ. Иртнĕ çул «Тавах асаттене Çĕнтерӳшĕн» ӳкерчĕксен конкурсĕн дипломне, маларах пĕтĕм Раççейри «Манăн пĕчĕк çĕршыв» творчество конкурсĕнче 1 степень диплома тивĕçни те – пысăк ӳсĕм. Математикăпа интернет-олимпиадăсене хутшăнса хăйĕн ӳсĕмĕнчи вĕренекенсем хушшинче яланах çĕнтерсе пычĕ. «Сывлăх» спорт шкулĕнчи шывра ишекенсен секцине кăмăлпа çӳрекенскер, Виç ипостаçлă Таса Турăн Орининти чиркĕвĕн вырсарни шкулне те кăмăллать. Математикăпа акăлчан чĕлхине юратаканскер, чăваш чĕлхипе те – малтисен йышĕнче. Ăна яланах «Чăваш чĕкеçĕ» конкурсра курма пулать.

Эпир уншăн савăнатпăр, унран тĕслĕх илме тăрăшатпăр.

Оринин шкулĕнче вĕренекенсем.

Çамрăк çăлавçăсем Атăл çинче ăмăртрĕç

Эпир, Ильинкăри вăтам шкулта вĕренекенсем – «Всероссийское общество спасания на водах» (ВОСВОД) организацин Чăваш Республикин уйрăмĕн активлă членĕсем. Çавна май пирĕн шкулăн команди черетлĕ хут çамрăк çăлавçăсен регионсем хушшинчи ăмăртăвне хутшăнчĕ. Çак ăмăртăва Раççей МЧС-ĕн тата ВОСВОД-ăн активисчĕсем йĕркелесе ирттерчĕç.

Ăмăртăва Муркаш районĕнчи, Мари Эл Республикинчи, Пăрачкав районĕнчи, Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенчен килнĕ командăсем хутшăнчĕç.

Спортпа çăлав ăмăртăвне Раççей МЧС-ĕн Чăваш Енри управленийĕн çынсене шыв çинчи хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессипе ĕçлекен уйрăмăн ертӳçи Герман Майков уçрĕ. Вăл та, ытти хăнасем те шыв çинче çынсене çăласси питĕ пархатарлă ĕç пулнине палăртрĕç.

Ăмăрту умĕн пирĕнпе хăрушсăрлăх инструктажне ирттерчĕç. Ăмăртусем çак енсемпе иртрĕç: шывра путакана кимĕпе усă курса çăласси, путакана çăлав ункипе пулăшасси, кимĕпе кайма пĕлни (шыври дистанцие кĕске вăхăтра тухасси), теори ыйтăвĕсене хуравласси.

Ăмăрту питĕ хĕрӳ иртрĕ. Йĕркелӳçĕсем палăртнă тăрăх, кăçалхи ăмăртăва ачасем пурте лайăх хатĕрленнĕ, вĕсен ăсталăхĕ те çултанçул ӳссе пырать.

Эпир, Атăл хĕрринче пурăнакансем (Ильинка шкулĕн команди), ăмăртура 2-мĕш вырăн йышăнма пултартăмăр. Шупашкар хулинчи команда çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, 3-мĕш вырăна Çĕнĕ Шупашкар хулинчи команда тухрĕ.

Ăмăртăва пухăннисене пирĕн шкулти ачасем, сывлăха çирĕплетмелли «Волжанка» лагере çӳрекенсем, пултарулăх номерĕсемпе савăнтарчĕç. Çак кун нумайлăха асра юлĕ.

Юлия ЧЕРНОВА,
Ильинка шкулĕн вĕренекенĕ.

РЕДАКЦИРЕН:

«Çамрăк журналист» кăларăм декабрь уйăхĕччен кашни уйăхрах пичетленĕ.

Çавăнпа та çамрăк журналистсем хăйсен е юлташĕсен çу кунĕсем пирки, çамрăксене кăсăклантаракан ыйтусем пирки, ялсенче иртекен тĕрлĕ уяв пирки, вырăнсенчи сумлă та хисеплĕ çынсем çинчен район хаçатне çырса тăрасса шанатпăр.

Сăвă е калав çырма кăмăллакансенчен те хайлавсем кĕтетпĕр.

Тĕрлĕ ыйту пулсан редакцие кĕрсе тухăр е çак номерсемпе шăнкăравлăр: 8(83541)62-2-82, 8-927-857-42-06.

Кăларăма хатĕрлекенсем:
В. Шапошников,
Н. Николаева,
А. Белов,
Р. Макарова.